29-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
СЕНТЯБРЬ
25
ШАМАТКУН
191(6428) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

НОВО-МОСКОВСК, СИНЕЛЬНИКОВО, ЛОЗОВАЯ тата ПАВЛОГРАД хулисене нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче çак соединенисемпе чăссем çапăçма вĕренсе çитнин тата маневрсем тума пĕлнин лайăх тĕслĕхĕсене кăтартса панă:

СУЧКОВ полковникăн 195-мĕш стрелковăй дивизийĕ, ГОЛОСКО генерал-майорăн 333-мĕш стрелковăй дивизийĕ, БИЛЮТИН полковникăн Хĕрлĕ ялавлă 25-мĕш Гвардейски стрелковăй дивизийĕ, КАЛУГИН генерал-майорăн Хĕрлĕ ялавлă 35-мĕш Гвардейски стрелковăй дивизийĕ, ЩЕРБАКОВ полковникăн 38-мĕш Гвардейски стрелковăй дивизийĕ, СЕЛИВЕРСТОВ полковникăн 295-мĕш истребительнăй авиаци дивизийĕ, КЛЕВЦОВ генерал-майорăн 244-мĕш бомбардировочнăй авиаци дивизийĕ, БЕЛИЦКИЙ полковникăн 262-мĕш çĕрлехи бомбардировочнăй авиаци дивизийĕ, МЕСЕВИЧ полковникăн 305-мĕш штурмовой авиаци дивизийĕ, СМИРНОВ полковникăн 288-мĕш истребительнăй авиаци дивизийĕ тата ШЕВЧУК капитанăн 269-мĕш уйрăм саперный батальонĕ.

Тунă çитĕнĕве ялавлала палăртса хăварас майпа малашне çак соединенисемпе чăссене çапла ячĕсемлĕ тăвас:

195-мĕш Ново-Московски стрелковăй дивизи,
295-мĕш Ново-Московски истребительнăй авиаци дивизийĕ,
333-мĕш Синельниковски стрелковăй дивизи,
25-мĕш Хĕрлĕ ялавлă Гвардейски Синельниковски стрелковăй дивизи,
35-мĕш Хĕрлĕ ялавлă Гвардейски Лозовски стрелковăй дивизи,
38-мĕш Гвардейски Лозовски стрелковăй дивизи,
244-мĕш Лозовски бомбардировочнăй авиаци дивизийĕ,
262-мĕш Лозовски çĕрлехи бомбардировочнăй авиаци дивизийĕ,
305-мĕш Павлоградски штурмовой авиаци дивизийĕ,
288-мĕш Павлоградски истребительнăй авиаци дивизийĕ,
269-мĕш Павлоградски уйрăм саперный батальон.

Верховный Главнокомандующий
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1943 çулхи сентябрĕн 23-мĕшĕ.

Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕн генералĕсемпе офицерĕсене Суворов орденĕсемпе наградăлани

Новороссийск районĕнче десант антарнă чухне çапăçу операцийĕсене пĕлсе, хастаррăн ертсе пынăшăн тата нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç пынă çапăçусенче çав операцисене пула пысăк ăнăçусем тунăшăн СССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ сентябрĕн 18-мĕшĕнче йышăннă Указ тăрăх çаксене наградăланă:

1-мĕш степеньлĕ Суворов орденĕпе К. Н. **Леселидзе** генерал-лейтенанта,
Г. Н. **Холостяков** контр-адмирала.

2-мĕш степеньлĕ Суворов орденĕпе 6 генерала офицера наградăланă.

3-мĕш степеньлĕ Суворов орденĕпе пĕр офицера наградăланă.

(ТАСС).

Тинĕс-Çар Флочĕн адмиралĕсемпе офицерĕсене орденсемпе наградăлани

Таганрог тата Осипенко районĕсенче десантсем антарнă чухне çапăçу операцийĕсене пĕлсе, хастаррăн ертсе пынăшăн тата нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç пынă çапăçусенче çав операцисене пула пысăк ăнăçусем тунăшăн СССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ сентябрĕн 18-мĕшĕнче кăларнă Указ тăрăх çаксене наградăланă:

1-мĕш степеньлĕ Кутузов орденĕпе—С. Г. Горшков контр-адмирала.

2-мĕш степеньлĕ Суворов орденĕпе 2 офицера наградăланă.

3-мĕш степеньлĕ Суворов орденĕпе 4 офицера наградăланă.

(ТАСС).

Чăваш республикинчи медицина работникĕсене орденсемпе тата медальсемпе наградăлани

СССР Союзĕн Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх, нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче аманнă Хĕрлĕ Çар боецĕсене тата командирĕсене сыватас тĕлĕшпе эвакогоспитальсенче вăя шеллемесĕр ĕçленĕшĕн, эпидемие хирĕç тумалли мероприятисене ăнăçлăн туса пынăшăн, ĕçсыннисене медицина енĕпе пулăшас ĕçе лайăх организациленĕшĕн тата медицина кадрĕсене хатĕрленĕшĕн ССР Союзĕн Сывлăха Сыхлав Халăх Комиссариачĕн медицина работникĕсен пысăк ушкăнне орденсемпе тата медальсемпе наградăланă. Наградăланисем хушшинче Чăваш республикинчи медицина работникĕсем те пур.

Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе эвакогоспиталь начальникне Ананий Иванович **Ананьев** юлташа тата Çĕмĕрлери куç чирĕнчен сыватакан врачебнăй пунктри врача Людмила Михайловна **Архангельская** юлташа наградăланă.

Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе Чăваш АССР Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачĕн эвакогоспитальсен отделĕн главнăй хирургне Иван Моисеевич **Стельмашонок** юлташа, **«Знак почета»** орденĕпе эвакогоспиталь врачне Павел Иванович **Сапожков** юлташа, **«За трудовую доблесть»** медальпе Шупашкар больницинчи фельдшера Александр Иринархович **Воронов** юлташа, **«За трудовое отличие»** медальпе Çĕрпӳ районĕнчи фельдшера Иван Ефимович **Ефимов** юлташа, Çĕмĕрле районĕнчи больницăри операционнăй сестрана Валентина Александровна **Колесникова** юлташа тата вăрман завочĕн фельдшерне Михаил Григорьевич **Мичурин** юлташа наградăланă.

Крахмалтрест предприятийĕсенче

Çуллахи уйăхсем крахмалтрест предприятийĕсемшĕн, вĕсен ĕç условийĕсене кура, сезона хатĕрленмелли тапхăр шутланнă. Вăрçăччен хи çулсенче çуллахи вăхăтра вăл предприятисенче нумайĕшĕнче ремонт ĕçĕсем кăна пынă. Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче вĕсем вара пĕтĕм çулталăк тăршшĕпех продукци кăларса тăма тытăнчĕç. Кăçал çав продукци тĕлĕшпе малтанхи çур çулхи плана пур заводсем те ирттерсе тултарнă.

Паттăр Хĕрлĕ Çар наступлени пуçласа хамăрăн тăван çĕршыва нимĕç захватчикĕсенчен тасатса пыни Совет çыннисене питĕ савăнтарчĕ. Хĕрлĕ Çар совет хулисене ирĕке кăларнине крахмал завочĕсен коллективĕсем хăйсен ĕçне тата та лайăхлатнипе ответлерĕç. Çапла, августри плана **Кавалти завод 324 процент, Йĕпреçри завод 133 процент, Елчĕкри завод 161 процент** тултарнă. Крахмалтрест плана **143,5 процент** тултарнă.

Йĕпреçри, Елчĕкри, Первомайскинчи заводсем сезона пур тĕлĕшпе те хатĕрленсе çитнĕ. Çапла ĕнтĕ, вĕсем кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра та лайăх ĕçлеме пултарĕççĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Сентябрĕн 23-мĕшĕнчи оперативнăй сводка

Çĕçенхир фронтĕнчи çарсем ВОРСКЛА шывĕ урлă ăнăçлăн каçнă та виçĕ кун хушши çапăçнă хыççăн, сентябрĕн 23-мĕшĕнче, Украинăри область центрне—ПОЛТАВА хулине тытса илнĕ.

БРЯНСК фронтĕнчи çарсем, малалла çав тери хăвăрттăн тапăнса пырса, УНЕЧА хулипе чи кирлĕ чугун çул узелне тытса илнĕ.

ДНЕПРОПЕТРОВСК хули енче пирĕн çарсем çаплах малалла тапăнса пынă, 5 километртан пуçласа 10 километр таран малалла куçса, халăх пурăнакан 30 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра БАБАЙКОВКА, ПРЕОБРАЖЕНКА, ТОПЧИНО, МАГДАЛИНОВКА, ОЧЕРЕТОВАТОЕ, КУЛЕБОВКА, ИЛЛАРИОНОВО, ПЕТРОВКА, ВЕСЕЛЫЙ ятлă пысăк пунктсене тытса илнĕ.

КРЕМЕНЧУГ хули енче пирĕн çарсем ăнăçлăн наступлени туса пынă, 10 километртан пуçласа 15 километр таран малалла куçса, халăх пурăнакан 140 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра БОЛЬШИЕ ЛИПНЯГИ, ЯЛОСОЕЦКОЕ, ТРУБАЙЦЫ, СЕМЙОНОВКА, СТЕПНОВКА, ДЗЮБОВЩИНА, БЕЛОЦЕРКОВКА, БИРКИ, ЛОБАЧИ, БРАТЕШКИ, АНТОНЦЫ, БУГАЕВКА, ВОЙТОВКА ятлă пысăк пунктсене тата УМАНЦЕВКА, РЕШЕТИЛОВКА, БРАТЕШКИ, САГАЙДАК ятлă чугун çул станцийĕсене тытса илнĕ.

КИЕВ енче пирĕн çарсем ăнăçлăн наступлени туса пынă, 10 километртан пуçласа 15 километр таран малалла куçса, халăх пурăнакан 200 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра Полтава облаçĕнчи ГЛЕМЯЗОВО ятлă район центрне, РОЖНЫ, РОЖЕВКА, БОГДАНОВКА, БОЛЬШАЯ ДЫМЕРКА, ГОГОЛЕВ, КРАСИЛОВКА, ТРЕБУХОВО, ДУДАРКОВО, СТАРОЕ, ВЕРГУНЫ-ПОЛОГИ, ХОЦКИ, ПЕСЧАНОЕ ятлă пысăк пунктсене тата БОБРИК, ДЫМЕРКА, БАРЫШЕВКА ятлă чугун çул станцийĕсене тытса илнĕ.

ГОМЕЛЬ енче пирĕн çарсем çаплах ăнăçлăн наступлени туса пынă, 10 километртан пуçласа 20 километр таран малалла куçса, халăх пурăнакан 300 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра ВАСИЛЬЕВКА, МАРЬИНСКАЯ, ЦЫНКА, ЛОГОВЕЦ, ЛОПАЗНА, ВЕЛИКАЯ ДУБРОВА, КРАСНОВИЧИ, СТАРАЯ ГУТА, МАЙТОПОВИЧИ, ДАРЕВИЧИ, ИСТОБКИ, КАРПОВИЧИ, СОЛОВЬЕВКА, ШУМИЛОВКА, ПЕТРОВКА, ДУБРОВНОЕ, КУЛИКОВКА, ПЕТРУШИН, ПОЛИБОТКИ, КАРХОВКА, ВИДЕЛЬЦЫ ятлă пысăк пунктсене тытса илнĕ.

СМОЛЕНСК енче пирĕн çарсем ăнăçлăн наступлени туса пынă, 10 километртан пуçласа 15 километр таран малалла куçса, ПОЧИНОК хулине тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан 150 пункта ытла йышăнса илнĕ. Вăл шутра ПЕРФИЛОВО, ПОНЯТЬКОВО, ПУЗАНОВО (Смоленск хулинчен 15 километр çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре), ЛАПТЕВО, ВЕРНИБИСОВО, ПУТЯТИНКА, ПИЩАЛОВО, САЛОВА, ЛУЧЕСА, ХМАРА, ПОЧУЛИ ятлă пысăк пунктсене тата ПЕРЕСНА, ПАНСКАЯ, РЯБЦЕВО, ПРИДНЕПРОВСКАЯ, КАРБИНОВО, ПЕРЕСВЕТОВО ятлă чугун çул станцийĕсене тытса илнĕ.

Пирĕн СМОЛЕНСКРАН çурçĕр-хĕвеланăçнерехре наступлени туса пыракан çарсем 5 километртан пуçласа 7 километр таран малалла куçнă, халăх пурăнакан 40 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра ДРОЗДЫ, ТАРАСЕНКИ, МАРТИНОВО, ПОПАРЫ, ОСИПОВКА, СКУБЯТНО, СИРИЦЫ, МАКУНИНО, ЧАЧИНО, СЕВЕРО-ИПКИ ятлă пысăк пунктсене тытса илнĕ.

Сентябрĕн 22-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 28 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 82 самолетне персе ӳкернĕ.

* *

Çĕçенхир фронтĕнчи çарсем, наступлени туса пырса, Ворскла шывĕ урлă каçнă та Полтава патне пымалли вырăнсенче çапăçма пуçланă. Тăшман ку хулана вăйлăн хӳтĕленĕ, хăйĕн пехотине контратакăна таттисыппиисĕр кĕрте-кĕрте янă, çав пехотăна танксемпе артиллери пулăшса пынă. Нимĕçсем хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, совет боецĕсем хулана вăркăнса кĕрсе кайнă. 3 кун хушши хаяррăн çапăçнă хыççăн (вăл çапăçусенче темиçе хутчен те штык вĕççĕн тытăçа-тытăçа илнĕ) совет боецĕсем Украинăри область центрне, чи паха чугун çул узелне—Полтава хулине нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă. Хулашăн пынă çапăçусенче тăшмана йывăр çухатусем кӳнĕ. Питĕ нумай çар техники тата боеприпассем, продовольстви, тĕрлĕрен çар пурлăхĕ хунă складсене тытса илнĕ.

* * *

Гомель енче пирĕн çарсем ăнăçлăн наступлени туса пынă, халăх пурăнакан 300 пункта ытла тытса илнĕ.

Брянск фронтĕнчи çарсем, çав тери хăвăрттăн тапăнса пырса, 20 километр таран малалла куçнă, нимĕçсен вăйлă тĕреклетнĕ оборона пунктне тата чугун çул узелне—Унеча хулине тытса илнĕ. Пирĕн танковăй тата моторизованнăй подразделенисем, тăшмана хăваласа пырса, нимĕçсен 1500 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. 22 тупă, 82 пулемет, грузсем тиенĕ 70 автомашина тытса илнĕ, 150 гитлеровеца тыткăна илнĕ.

Соловьевка ятлă халăх пурăнакан пунктран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри вăрмансенче пĕр соединени чаçĕсем, ăста маневр туса, нимĕç пехотин пĕр полкĕ каялла чакакан çула тапнă. Пирĕн çăмăллăн куçса пыракан отрядсем тăшмана темиçе пая уйăрса янă та ăна пайăн-пайăн пырса çапса, пĕтĕмĕшпех аркатса тăкнă. Нумай çынна тыткăна илнĕ. Аркатса тăкнă нимĕç полкĕн пĕтĕм артиллерине, боеприпасĕсене, хĕçпăшалне тата пурлăхне тытса илнĕ.

* * *

Днепропетровск енче пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă. Резервран халь тин фронта çитнĕ чаçсене тăшман çапăçăва кĕртсе янă, хушăри рубежсенче вăйлăн хирĕç тăнă. Пирĕн çарсем, гитлеровецсем хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, халăх пурăнакан 30 пункта ытла тытса илнĕ. Çав пунктсемшĕн пынă çапăçусенче нимĕçсен 8 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă тата 800 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Киев енче пирĕн çарсем ăнăçлăн малалла тапăнса çапăçнă. Пĕр соединени чаçĕсем, нимĕçсем хирĕç тăнине çĕнтерсе, Полтава облаçĕнчи Глемязово ятлă район центрне йышăнса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти нумай пунктсене тытса илнĕ. Пирĕн çарсем пыра-пыра çапнипе тăшман каялла чакать, хăйĕн тупписене, темĕн чухлĕ снаряд, мина тата патрон пăрахса хăварать. Пĕр участокра пирĕн çарсем юсавлă 6 танка экипажĕсемпе пĕрлех тытса илнĕ. Пирĕн чаçсем паян Нежин хулипе Киев хушшинчи чугун çул çинчи Бобрик станцийĕшĕн вăйлăн çапăçнă. Каç пулса килнĕ çĕре пирĕн çарсем, хĕвелтухăçĕнчен тата çурçĕртен пырса çапса, тăшмана каялла хăваласа янă. Нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене пĕр пин çынна çити пĕтерсе тăкнă. 20 тупă тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

* * *

Смоленск енче пирĕн çарсем, тăшманăн нумай контратакисене сире-сире ярса, çаплах малалла куçса пынă, халăх пурăнакан 150 пункта ытла тытса илнĕ. Пĕр соединени боецĕсем Починок хулине йышăнса илсе Рославль хулипе Смоленск хушшинчи чугун çула татнă. Кун каçиччен пынă çапăçусенче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 2000 çынна çити пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем нумай тытса илнĕ. 100 гитлеровеца ытла тыткăна илнĕ.

Смоленскран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тăшман, пирĕн çарсен наступленине чарма хăтланса, 20 контратака ытла тунă. Пирĕн çарсем тăшманăн пур контратакисене те сирсе янă та хаяррăн çапăçнă хыççăн Каспля шывĕ урлă каçса кайнă. Çитĕнĕве вăйлатса пырса, пирĕн чаçсем тăшмана хăваласа янă та халăх пурăнакан чылай пунктсене тытса илнĕ.

* * *

Хура тинĕс флочĕн летчикĕсем нимĕç çарĕсене турттарса пыракан 6 баржăна, хăй тĕллĕн çӳрекенскерсене, шыва путарнă. Тата унсăр пуçне тăшманăн 5 баржипе хуралта çӳрекен 3 катерне сиенленĕ. Сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 6 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Украинăри партизансен Коцубинский ячĕпе тăракан отрячĕ халăх пурăнакан пысăк пунктра вырнаçса тăнă нимĕç гарнизонне тапăннă. Партизансем хаяр тытăçура гитлеровецсене нумайĕшне пĕтерсе тăкнă, юттисем вара сапаланса тарса пĕтнĕ. Аркатса тăкнă гарнизона пулăшма часах тăшман пехотин батальонĕ пырса çитнĕ. Партизансем нимĕçсене пăшалпа тата пулеметсемпе пеме тытăннă. Нимĕçсен 110 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ, вара тăшман нимĕн тĕлли-паллисĕр каялла чакнă. Партизансем трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен 430-мĕш йывăр артиллери дивизийĕнчи 2-мĕш батарейăн тыткăна лекнĕ командирĕ лейтенант Гельмут Болумель çапла каласа панă: «1943 çулхи август уйăхĕн варринче эпĕ Реймск хулинчи офицер шкулĕнчен вĕренсе тухрăм. Нимĕç çарĕсем Хĕвелтухăç фронтĕнче çулла тӳснĕ поражениссем вĕренекенсене питĕ хăратрĕç. Вĕренекенсене лăплантарас тесе, шкул начальникĕ Эвеминг генерал-майор пире лекци вуласа пачĕ. Лекцин теми çакăн пек пулчĕ: «Нимĕçсем Курск хули çине тапăнса пыни ăнăççăр пулни». Генерал çапла каларĕ: «Эпир йăнăшрăмăр. Пирĕн «тигр» йышши танксен хăватлă соединенийĕсене вырăссем çав тери хаяррăн хирĕç тăрасса никам та кĕтмен. Нимĕçсен çарне каялла чакма тиврĕ. Эпир чылай пысăк территори хăвартăмăр. Анчах та халĕ вырăссен наступленине чарса лартнă», терĕ.

Фронта çитсен, эпĕ Эвеминг генерал-майорăн тата нимĕç командованийĕн планĕсем пачах юрăхсăр пулнине куртăм. Вырăссем пирĕн оборона рубежĕсене, эпир хамăр нумаях пулмасть никам та çĕнтерме пултарайман тесе шутланăскерсене, татса кĕчĕç. Нимĕç çарĕ каялла чакать, çав тери пысăк çухатусем тӳсет, ун пек çухатусене вăл вăрçă пуçланнăранпа та тӳссе курман».

Фронтовой уйăхлăхра социализмлă ăмăртăва анлăнрах сарар, мĕнпур ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлер, хамăрăн паттăр Хĕрлĕ Çара вăйлăнрах пулăшар!

Фронтовой уйăхлăха кăтартуллăн ирттерессишĕн

ТАВАЙ, сентябрĕн 24-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Районри пур колхозсенче те Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ сентябрĕн 25-мĕшĕнчен пуçласа октябрĕн 25-мĕшĕччен республикăра ялхуçалăхĕнчи пĕтĕм ĕçсене вĕçлес тĕлĕшпе фронтовой уйăхлăх ирттересси çинчен йышăннă постановление пысăк активлăхпа итлерĕç, уйăхлăхра татăклă çĕнтерӳсем тума сăмах парăççĕ. ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕ колхозсене районри партипе совет активне ячĕç. Актив колхозниксемпе колхозницăсене фронтовой уйăхлăхăн задачисем çинчен тĕплĕн ăнлантарса парать. Колхозниксемпе колхозницăсем уйăхлăха хĕрӳллĕн хутшăнаççĕ. Паян «Красная Чувашия», «Красный Октябрь», Чапаев тата Ленин ячĕсемпе тăракан колхозсем государствăна çĕр процентнĕпех тырă парса татрĕç. Çавăн пекех «8-е марта», Мичурин ячĕпе тăракан колхозсем те авăн çапас ĕçе çак кунсенчех вĕçлессишĕн хĕрӳллĕн ĕçлеççĕ.

Паянхи куна 32 колхозран 16-шĕ государствăна тырă памалли плана ытлашшипех тултарнă.

Колхозсенче хĕле хатĕрленнĕ май, выльăхсен витисене юсама тытăнчĕç. Çак кунсенче хăшпĕр колхозсенче темиçе çĕнĕ вите туса пĕтереççĕ.

С. ФЕДОРОВ,
Райсовет исполкомĕн председателĕ.

Ăмăртса ĕçлесе пур обязательствăсене те пурнăçланă

ВĂРНАР, «Апнер» колхоз сентябрĕн 15-мĕшне государство умĕнчи пур обязательствăсене те чыслăн пурнăçларĕ. Колхоз председателĕ коммунист Н. Васильев юлташ государствăна тата Хĕрлĕ Çар фондне тырă срокчен парса татассишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлерĕ. Ку колхоз районра иккĕмĕш вырăн йышăнчĕ. Колхозниксем халĕ кунĕн-çĕрĕн авăн çапаççĕ. Вырса пуçтарнă тыррăн çуррине ытла çапнă та ĕнтĕ.

Çак çитĕнӳсене бригадирсем пĕрпĕринпе ăмăртса ĕçленипе тунă. Ăмăртура 4-мĕш бригадăн бригадирĕ—отечественнăй аслă вăрçă инваличĕ Николай Степанов малта пырать.

— Эпĕ çак хаяр вăрçăра нимĕçсемпе çапăçса амантăм. Вăрçă хирĕнчен вăхăтсăр тухмалла пулчĕ пулин те, эпĕ тылри стахановла ĕçпе фронта пулăшса пырăп,—тет вăл.

И. БЕЛКИН.

Колхоз авăн çапса пĕтерчĕ

КУСЛАВВКА. Варасăрти «Правда» колхоз сентябрĕн 16-мĕшĕнче авăн çапас ĕçе пĕтĕмпех вĕçлерĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем, пирĕн войскăсем тăшмана вăйлăн аркатса пынипе хавхаланса, хăйсен ĕçлес хастарлăхне ӳстереççĕ. А. Челкова, Комбанькова, Петрова колхозницăсем кунĕн-çĕрĕн ĕçлесе, ĕç нормине виçĕ-тăватă хут иртгерсе тултараççĕ. Харитоновăпа Романова юлташсем ертсе пыракан бригадăсем пур ĕçре те малта пыраççĕ. Ку бригадăсем авăн çапса пĕтернĕ хыççăнах çĕрулми кăларма тытăнчĕç.

Колхоз кăçал планран иртгерсе 51 гектар ыраш акса хăварчĕ, паянтан кĕрхи çĕртме туса пĕтерет.

И. ШАРКОВ.

Уйхир ĕçĕ вĕçленет

ВĂРНАР, сентябрĕн 20-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Районри пур колхозсем те кĕлтесене уйран турттарса кĕчĕç. Октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне пур колхозсем те авăн çапса пĕтереççĕ. «1-ое мая», «Трактор» колхозсем авăн çапса пĕтерсе, çĕрулми кăларма тытăнчĕç.

М. МАКСИМОВ.

Çĕрулми кăларса пĕтерни

ЭЛĔК. (**Хамăр корр.**). Сентябрĕн 18-мĕшĕ тĕлне районра 20 колхоз çĕрулми кăларма тытăннă. Кагановăч ячĕпе тăракан колхоз çĕрулми кăларса пĕтерчĕ. Çак кунсенчех «Маяк», «Трудовик», «Доброволец» колхозсем те çĕрулми кăларса пĕтереççĕ.

Х. ЛИСИН.

Государствăна тырă парас ĕçе хăвăртлатмалла

ШĂХАСАН. Районри малта пыракан колхозсем, Сталин юлташа пуринчен малтан рапорт парассишĕн ăмăртса ĕçлесе, государствăна тырă парас хăвăртлăха ӳстерчĕç. Çĕнĕ Чалкасси ялсоветĕнчи "Новая жизнь", „Активист", „Красный партизан", „Ямурза" колхозсем государствăна тырă парса татрĕç. „Ямурза" колхоз 1944 çулшăн государствăна 63 центнер тырă парса хучĕ. „Новая жизнь" колхоз тырă парса татнипе пĕрлех, государствăна пахча-çимĕçсемпе çĕрулми те парса татрĕ.

Молотов ячĕпе тăракан, Яманахри „Майăн 1-мĕшĕ", Хирти Тугайри „Майăн 1-мĕшĕ" колхозсем те ыранпаянах государствăна тырă парса татаççĕ.

Анчах та районĕпе илсен тырă парас ĕç начар пулса пырать-ха. „Красный луч" колхоз государствăна тырă памалли плана 3 процент, Высоковка ялсоветĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз 13,5 процент, Буденный ячĕпе тăракан колхоз 25 процент çеç пурнăçланă. Çав вăхăтрах Сталин ячĕпе тăракан колхоз колхозниксене аванс. йĕркипе тырă 44 процент, Буденный ячĕпе тăракан колхоз 43 процент салатса панă.

В. ВЕСЕЛОВ.

Выльăхсене хĕл каçарма тимлĕн хатĕрленер

Çĕнĕ Шуртанри «Малалла» колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана кăçал ирттерсе тултарчĕ. Çакă вăл колхозниксем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе тӳрĕ кăмăлпа тата вăя шеллемесĕр ĕçленине уççăн кăтартса парать. Колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли çулталăк планне майракаллă тултăра выльăхсем енĕпе 106 процент, сыснасем енĕпе 108 процент, сурăхсем енĕпе 101 процент тултарчĕ. Лашасем ĕрчетес тĕлĕшпе те колхоз государство планне 100 процент пурнăçларĕ.

Çамрăк выльăхсене сыхласа хăварас тата выльăхсен хисепне ӳстерес ĕçре колхоз пысăк çитĕнӳсем турĕ. Колхозра иртнĕ çулта та, кăçал та пĕр çамрăк выльăх та вилмен. Çамрăк выльăхсене пурне те сыхласа хăварнă. Свинарка Анна Петрова юлташ иртнĕ çулта пĕр сысна аминчен 18 çăвăр илнĕ. Кăçал вăл 6 сысна аминчен 53 çăвăр илнĕ. Сыснасем çак кунсенчех иккĕмĕш хут çăвăрлаççĕ. Анна Петрова кăçал кашни сысна аминчен 23 çăвăр илме обязательство илнĕ.

«Малалла» колхоз çулсеренех выльăхсем валли апат ытлашшипех хатĕрлесе хурать. Кăçал колхоз çителĕклĕ таран утă хатĕрлерĕ, 50 тонна силос хывса хăварнă. Кунта выльăх апатне перекетлĕн те тирпейлĕн тыткаласси йăлана кĕнĕ. Выльăх апачĕсене фермăсем патне илсе пырсан, акт çырса вĕсене ферма заведующине панă. Ферма работникĕсем выльăх апатне перекетлĕн тыткалаççĕ. Выльăхсене вăхăтра апат параççĕ, шăвараççĕ, тасатса тăраççĕ.

Колхоз обществăллă выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма çурт-йĕрсем хатĕрлес тĕлĕшпе те аван ĕçлет. Выльăхсен витисен тăррисене кăçал çĕнĕрен витрĕç, шăтăксене питĕрчĕç, выльăх-чĕрлĕхсене усрама витесем çителĕклĕ, çамрăк выльăхсене йышăнма ăшă вите пур. Витесене яланах таса тытаççĕ. Вите урайĕсене икĕ эрнере пĕрре çусах тăраççĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессишĕн Асхвари «Красное пламя», Çĕнĕ Мамири «Красноармеец», Каганович ячĕпе тăракан колхозсем те тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана ирттерсе тултарчĕç. Выльăхсене хĕл каçарма хатĕрленес тĕлĕшпе те начар мар ĕçлеççĕ.

«Красное пламя» колхоз пăрупа сысна витисене юсаттарчĕ, лашасем валли çĕнĕ вите туса лартрĕ. «Красноармеец» колхоз кăçал 40 пăру вырнаçмалăх тата путексем валли ăшă вите, чăхсем валли вите туса лартрĕ. Каганович ячĕпе тăракан колхозра та витесене юсарĕç. Ку колхозсем выльăхсене хĕл каçарма апат-çимĕç те çителĕклĕ таран хатĕрлесе хунă.

Анчах та хăшпĕр колхозсен руководителĕсем выльăхсене хĕл каçарма хатĕрленес тĕлĕшпе нимĕн те туманха. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç çине çиелтен пăхаççĕ. «Коммунар», «Искра», «Чуваш ЦИК» колхозсенче выльăх витисен тăррисене юсасси çинчен шутламаççĕ те.

Выльăх-чĕрлĕхсене хĕл каçарма халех хатĕрленсе çитмелле.

В. ВЕСЕЛОВ.

КАНАШ.

Фронтовиксем валли—ăшă тумтирсем

Октябрьски районри нумай колхозсенче фронтовиксем валли уяв парнисем хатĕрлеççĕ. „Дружба" тата „Красный Горт" колхозсенчи çамрăксем 6 мăшăр носки, 7 мăшăр алшиш тата ытти япаласем те пухнă.

Районри колхозсем фронтовиксем валли ку таранччен 160 мăшăр носки, 431 мăшăр çăм алшиш, 45 алшăлли, 75 мăшăр тăла тата 326 мăшăр ăшă алсасем пухнă.

* * *

КАНАШ, сентябрĕн 24-мĕшĕ. (Телефонпа). Вагонсем юсакан заводри пур цехсенче те фронтовиксем валли ăшă тумтирсем туянма укçа пухас ĕç анлăн сарăлса пырать. Вагонсем юсакан цехри рабочисем, электростанцинчи работниксен чĕнĕвне ответлесе, 8.760 тенкĕ укçа пухнă. Стахановец Мрачковский юлташ 110 тенкĕ, котельщик Фоменко юлташ 100 тенкĕ, Каплюха юлташ 120 тенкĕ панă.

Нумай рабочисем ăшă тумтирсем, çăм алшишсем, чăлхасем т. ыт. те параççĕ.

* * *

ЭЛЕК. (Хамăр корр.). Юманлăхри Буденный ячĕпе тăракан колхоз членĕсем тăван Хĕрлĕ Çар воинĕсем валли ăшă япаласем пухас ĕçе активлăн хутшăнчĕç. Вĕсем юлашки вăхăтра кăна 14 тир, носкисемпе алшишсем 18 мăшăр тата çĕлĕксем пухнă. Колхозник Н. Антонов фронтовиксем валли пĕр çăматă пачĕ.

Çавăн пекех «Труд», «Безбожник», «1-ое мая» колхозсенче те 33 мăшăр алшиш-носкисем, вуншар тир т. ыт. ăшă япаласем пухнă. Вырăс Сорменчи «Доброволец» колхоз членĕсем пĕр кун хушшинче 56 мăшăр чăлхапа алшиш тата 20 тир пухса районри склада хыврĕç.

Х. ЛИСИН.

Республика тулашĕнчен килнĕ çыру

Стахановла ĕçлеççĕ

Пирĕн Иваново облаçĕнчи торф кăларакан предприятисенче Чăваш республикинчен килнĕ çынсем нумай ĕçлеççĕ. Вĕсенчен нумайĕшĕсем халĕ стахановла ĕçленипе палăрса тăраççĕ. Йĕпреç районĕнчен килнĕ А. Толстов, Крутов юлташсем икшер норма тултарса ĕçлеççĕ. Комсомольски районран килнĕ Сизова, Егорова юлташсем те вĕсенчен юлмаççĕ. Стахановла ĕçленĕшĕн вĕсене пурне те премисем панă. Стахановла ĕçлекенсен хисепĕ ӳссех пырать.

Торф предприятийĕсенче ĕçлекен чăвашсем хушшинче культурăллă-массăллă ĕçе организацилесе пыма уйăрнă Кирилл Москов юлташ тимлĕн ĕçлет. Вăл ĕçлекенсене фронтри хыпарсене çийĕнчех пĕлтерсе тăрать, социализмлă ăмăрту организацилеме, ĕçе лайăх йĕркелесе простойсем пулассине пĕтерме пулăшса пырать. Нумай пулмасть ССР Союзĕн электростанцисен Халăх Комиссариачĕ К. Москов юлташа тав турĕ тата 500 тенкĕ укçа парса премилерĕ.

БОБРОВ,
ВКП(б) Гусь-Хрустальнăй горкомĕн секретарĕ, Иваново облаçĕ.

ÇУЛТАЛĂК ПЛАННЕ ОКТЯБРЬ УЯВĔ ТĔЛНЕ ТУЛТАРАССИШĔН

Шăхасан райпромкомбиначĕн коллективĕ кăçалхи август уйăхĕнче 11 пин тенкĕлĕх продукци кăларас вырăнне 17.316 тенкĕлĕх кăларнă. Промкомбинат, август уйăхĕнче Наркомместпром предприятийĕсен социализмлă ăмăртăвĕнче малти вырăна тухса, 10 пин тенкĕ преми илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Плана ирттерсе тултарасси ĕç вăхăчĕпе туллин усă куриинчен, ĕç условисене лайăхлатнинчен килет. Çакна асра тытса, промкомбинат руководителĕсем ĕçре кирлĕ хатĕрсемпе чĕртаварсене çителĕклĕ тата вăхăтра тупса параççĕ, ĕç условисене лайăхлатрĕç.

Комбинатри цехсемпе мастерскойсен коллективĕсем, рабочисем халĕ пурте пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Ăмăрту договорĕсене кашни эрнерех тĕрĕслесе пыраççĕ. Стахановецсен ĕç опычĕсемпе кашни рабочине тĕплĕн паллаштараççĕ. Çакăн пек туни ĕçри çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтерме пулăшать, рабочисене татах та тухăçлăнрах ĕçлеме хавхалантарать. Хĕçтимĕртен савăт-сапасем тата ытти хатĕрсем тăвакан Е. Егоров нормăна 210 процент, шорник А. Демьянов—146 процент, çăматă йăвалакансем: З. Васильева—127,5 процент, Д. Иванова—122 процент тултараççĕ. Стахановецсен йышĕ кунсерен ӳссе пырать.

Чăваш АССР Совнаркомĕ комбинат коллективĕ лайăх ĕçленине палăртса преми памалла туни кунти рабочисене хавхалантарчĕ. Комбинат коллективĕ çулталăкри плана Октябрь уявĕ тĕлне тултарма сăмах пачĕ

Ст. АСЛАН.

Планран ирттерсе 80 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларассишĕн

Шупашкарти лесхимартель çулталăкри плана сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне тултарчĕ. Нумай пулмасть артель коллективĕ, октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, çулталăк пĕтиччен планран ирттерсе 80 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларма обязательство илчĕ. Унсăр пуçне Октябрь уявĕччен пĕр пурăнмалли çурт туса пĕтерме йышăнчĕ.

Илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешсе, артель коллективĕ халĕ кунран кун çĕнĕ çитĕнӳсем тăвать.

Ф. КОНДРАТЬЕВ.

Икшер норма тултаракансен йышĕ ӳсет

ОКТЯБРЬСКОЕ, сентябрĕн 24-мĕшĕ. (Телефонпа). „Большевик" артельте, социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса пынине пула, юлашки вăхăтра икшер норма тултаракансен йышĕ чылай ӳсрĕ. Çĕвĕ çĕлекен цехри Н. Комиссарова, В. Карасева тата ытти юлташсем халĕ нормăна 250—300-шер процент тултарса пыраççĕ.

Артельте нумайранпа ĕçлекенсем çамрăксене професси илме пулăшас тĕлĕшпе сахал мар ĕçлеççĕ. Кунта чылай çамрăка ĕнтĕ хăйсем тĕллĕн ĕçлеме вĕрентнĕ.

Артель коллективĕ, Октябрь умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, çулталăкри плана Конституци кунĕ тĕлне тултарма палăртрĕ.

ПĔЧĔК ФЕЛЬЕТОН

„Пăртак уçăлтарас пуль?.."

Хĕрача-парикмахер мана кресло патне чĕнсен, пытармастăп, савăнтăм. Черет кĕтсе çур сехет ирттерни сая каймарĕ, тетĕп. Ку мастер, çамрăк пулсан та, хăвăрт ĕçлет. Хайхискер хăйне пулăшаканран «компресс» та ыйтса илчĕ. Ĕç вĕçленсе пырать.

Мастер «компресс» текенскере (вĕри шыв ăшне чиксе кăларнă хуралнă катампир татăкне) ӳт çине хучĕ те, çемçен калаçу пуçарчĕ.

— Пăртак уçăлтарас пуль?..—тесе ыйтрĕ çак.

— Савăнсах килĕшетĕп,—тетĕп.

Хай хискер пульвиризатора ĕçлеттерме пуçларĕ.. Резина хăмпува кăшт-кашт пускаласа, пит çине одеколон пĕрĕхрĕ.

Пулчĕ. Кресло çинчен тăратăп. Мастер мана кассăна укçа тӳлемелли талон çырса пачĕ. «Икĕ тенкĕ». Юнĕçке,—тетĕп хам ăшăмра.—Одеколонне сахал пĕтернĕрен юнĕ илет-ши ку, тетĕп. Тав туса касса еннелле çул тытатăп.

— Чим-ха, чим юлташ,—тесе чарчĕ çак мастер мана. Залра пурте лăх-лăх ахăлтатса ячĕç. Вăтаннипе чылаях хĕрелтĕм пулас.

— Одеколоншăн, юлташ, укçине хăма тӳлемелле, 10 тенкĕ...—пĕлтерет мастер.

Ку вăра тĕлĕнтермеллипех тĕлĕнтерчĕ. Сăмах-юмах ытлашши ан сарăлтăр тесе, йăпăртах 10 тенкĕ кăларса паратăп.

— Капла кусем, — тетĕп,—кашнинчех кун пек «уçăлтарсан», чылаях уçăлтараççĕ вара...

Кăна пире Шупашкар горкоммунхозĕн парикмахерскийĕнче курма лекрĕ. Анчах унта çеç мар. Канашри «Красный воин» тата «Авангард» артельсен парикмахерскийĕсенче те çавăн пекех. Унта та одеколоншăн пасар хакĕ тӳлеттереççĕ, çитменнине укçине кассăна тӳлемелле мар, мастерсем хăйсем илеççĕ, яланах черет.

Ĕççынни депутачĕсен Шупашкар тата Канаш хула совет исполкомĕсем, Чăваш АССР Коммуналлă хуçалăх наркомачĕ хăйсен парикмахерскийĕсене йĕркеллĕ ĕçлеттерме пуçлĕç-ши?

П. ВЕАЛОКИН.

Почта ĕçĕнче йĕркелĕх çук

КАНАШ. Катекри почта уйрăмĕ пĕр уйăх ĕнтĕ йĕркеллĕн ĕçлеймест. Транспорт çук пирки пĕрер эрне хушши хаçат-журналсем илсе пымаççĕ. Киров ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Никифоров) почта уйрăмне лаша памасăр тăрать. Çавна пула та ĕнтĕ колхозсене хаçатсем вăхăтра çитмеççĕ. Çак йĕркесĕрлĕхсене хăçанччен чăтса тăмалла-ши?

П. ВЛАДИМИРОВ.

Тĕрĕсленсе килнĕ çыру тăрăх

Нумаях пулмасть пирĕн пата Шупашкар районĕнчи «Трактор» колхоз членĕнчен çыру килчĕ. Ку çырура колхоз председателĕ Свинцов колхоза кирлĕ пек ертсе пырас вырăнне ирсĕр ĕçсем туса çӳрени çинчен пĕлтернĕччĕ. Эпир çав çырăва Шупашкар районĕнчи прокуратурăна тĕрĕслеме ятăмăр. Прокуратурăран пире çапла пĕлтерчĕç: çырура кăтартнă фактсем пурте тĕрĕс, халĕ Свинцова ĕçрен кăларнă, ăна судпа айăпласа ответ тыттараççĕ, тесе пĕлтерчĕç.

Ют çĕршывсенче

Черчилль общинăсен палатинче тухса калани

ЛОНДОН, сентябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Черчилль общинăсен палатинче сăмах тухса каланă. Вăл çапла каланă: «Эпĕ Африкăри операцисене вĕсем Францири е Голландири тата Бельгири нимĕçсене Ла-Манш урлă пырса çапни вырăнне пулаççĕ тесе нихăçан та каламан. Пачах урăхла, Вăтаçĕр тинĕсре çĕнĕ фронт уçни Германие тата вăл чуралантарнă е унпа пĕр каварлă государствăсене татăклăн пырса çапма кирлĕ ĕç пулса тăрать тесе шутланă».

Союзниксен Çурçĕр Африкăри çарĕсен операцийĕсем çинчен каласа, Черчилль союзниксен çарĕсем чылай çĕнтерӳсем тунине палăртнă. Кунсăр пуçне,—тенĕ Черчилль,—вырăссен çарĕсем çав тери сарлака фронтра çĕршер миля малалла куçнă, нимĕç кĕтĕвĕсене пысăк çухатусем тӳстерсе малалла хăвалаççĕ. Сывлăшри çапăçусем çинчен Черчилль çапла каланă: «СССР тата США авиацийĕсене шута илмесен те, Англи авиацийĕ пĕр хăй кăна та çапăçусене Германи шайĕнчен 50 процент ытла самолет кĕртнĕ. Германин çар промышленность центрĕсене çĕмĕресси халичченхинчен нумай хут вăйлăланчĕ», тенĕ.

Черчилль çакна пĕлтернĕ: Атлантика океанĕн çурçĕр енчи районĕнче тăшман юлашки тăвата уйăх хушшинче пĕр суту-илӳ суднине те путарайман, çавăн пекех сентябрĕн 15 кунĕ хушшинче тĕнчен нихăш пайĕнче те пĕр суднăна та путараймап.

Союзниксен Италири çарĕсем пуçарулăха хăйсен аллине илчĕç те халь тем сарлакĕш фронтпа çурçĕр еннелле куçса пыраççĕ, тенĕ Черчилль. «Иккĕмĕш фронт—тенĕ вăл,—тăшманшăн чи пысăк хăрушлăх пулса тăрать. Вăл халь хăй ĕçне тума пуçăнман-ха. Анчах та çав вăхăт çитĕ», тенĕ.

Черчилль малалла çапла каланă: Вăтаçĕр тинĕсре тухса пыракан ыйтусене сӳтсе-явма совет правительстви союзниксен уйрăм комиссине тума сĕнчĕ. Çак комиссие Великобритани представителĕ пулса Гарольд Макмиллан кĕрет. Великобританин, Çурçĕр Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен тата ССР Союзĕн Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен (е вĕсен представителĕсен) çак çывăх вăхăтрах конференци пулса иртмелле. Великобритани енчен çав конференцире Иден пулать. «Çавăн хыççăн вара çак çул пĕтичченех,—тенĕ Черчилль,—Рузвельтпа Сталин тата эпĕ пĕрле тĕл пулса калаçассине шанса тăратăп», тенĕ.

«Француз нацине ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен комитетăн представительне Вăтаçĕр тинĕсри ыйтусене сӳтсе-явас тĕлĕшпе ĕçлекен комиссие кĕртĕç, вăл çав комиссире Германие хирĕç вăрçакан виçĕ аслă державăпа пĕртан праваллă пулса ĕçлĕ»,—тенĕ Черчилль.

Корсикăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, сентябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Корсикăра кĕрешекен француз çарĕсемпе партизансен отрячĕсем Бонифачо-Порто-Веккьо линийĕнчен каялла ывăтса янă тăшмана çаплах хĕссе пыраççĕ. Юлашки кунсенче нимĕçсен 1000 çын ытла вилнĕ, темиçе çĕр çын тыткăна лекнĕ.

Француз чаçĕсемпе тата партизанĕсемпе пĕрле американецсен десант чаçĕ çапăçать.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх Корсикăри партизансем утравăн тĕп çулĕ çинчи Сартен тата Корт хулисене тытса илнĕ. Корсикăн хĕвеланăç енчи пайĕ пĕтĕмĕшпех француз патриочĕсен аллинче.

Тĕрĕсленĕ хыпарсем тăрăх, Марсель хулинчен Корсикăна нимĕç командисем илсе пыракан суднăсем кайнă, вĕсем пурте грузсăрах. Нимĕçсем вăл суднăсемпе хăйсен Корсика утравĕ çинчи çарĕсене илсе каясшăн пулмалла.

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, сентябрĕн 23-мĕшĕ (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен çарĕсем çаплах малалла куçса пыраççĕ. Вĕсем Джиноза, Авельяно тата Ачерно хулисене тытса илнĕ.

Союзниксен авиацийĕ çаплах тăшманăн çулйĕрĕсене, кĕперĕсене, çулйĕр узелĕсене, мототранспортне тата склачĕсене тапăнса тăнă.

Англи авиацийĕ Ганновер хулине хаяррăн тапăннă

ЛОНДОН, сентябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, сентябрĕн 23-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсен питĕ пысăк соединенийĕ нимĕçсен Ганновер хулине хаяррăн тапăннă. Хула çине 30 минута хушши бомба тăкнă. Вăйлă пушарсем пуçланса кайнă. Ытти соединенисем Ольденбург тата Эмден хулисем çине бомбăсем пăрахнă.

Истребительнăй авиаци тăшманăн Голландири тата çурçĕр-хĕвеланăç Германири аэродромĕсене атакăланă.

Американецсен „Вĕçекен крепоçсем" йышши бомбардировщикĕсем паян ирхине тăшманăн Нант тата Ванн-Мекон порчĕсенчи сооруженисене тапăннă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Совет Союзĕ тăрăх

Новороссийск хулине юсама пуçланă

Новороссийск хулинчи партипе совет работникĕсем партизансен ретне тăрса çапăçнă. Халĕ, хулана нимĕçсенчен ирĕке кăларнă хыççăн, вĕсем ăна юсас ĕçе организацилеме тытăнчĕç.

Урамсенче çапăçусем пынă вăхăтрах хулара пурăнакан çынсенчен тунă бригадăсем строительство валли йывăçсем хатĕрлеме пуçланă. Хулара радио ĕçлет, пекарньăсене юсаççĕ, малтанхи вăхăта кирлĕ чухлĕ апат-çимĕçсем кӳрсе пынă.

Краснодартан яланлăха ĕçлеме пилĕк врач пырса çитнĕ.

Новороссийскри почта çуртне нимĕç захватчикĕсем çунтарса янă пулнă. Çыхăну работникĕсем малтанхи корреспонденцисене урамрах йышăнма пуçланă. Часах телеграф ĕçлеме пуçлать.

Ростоври кăмрăк кăларакансене куçса çӳрекен электростанцисем парнеленĕ

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен ирĕке тухнă Ростов облаçĕнчи кăмрăк промышленноçне Азербайджанри энергетиксем çав тери паха парне панă. Баку промышленноçĕ чугун çул платформи çине вырнаçтарса, куçса çӳрекен вăйлă электростанцисем тунă. Çакă вăл пĕрремĕш хут тунă ĕç пулин те питех те ăнăçлă пулнă. Кашни электростанци 4 вагонран тата ăна туртса çӳрекен паровозран тăрать.

Бакури энергетиксем тунă куçса çӳрекен 4 электростанци кирлĕ вырăна çитнĕ. Вĕсем «Ростовуголь» тресчĕн предприятийĕсемпе шахтисене энерги парса тăраççĕ. (ТАСС).

МУСКАВРИ ГИДРОТЕХНИКА ИНСТИТУЧĔ

(Сĕнтĕрвăрринчи отделенийĕ)

1943—44-мĕш вĕренӳ çулĕ умĕн 1-мĕш курса **студентсем илесси** çинчен пĕлтерет.

Институтăн 1-мĕш курсĕнче вĕренме илнĕ студентсене 1943—44-мĕш вĕренӳ çулĕнче Сĕнтĕрвăрринчи çĕр йĕркелӳпе мелиораци техникумĕнче Мускаври гидротехника институчĕн профессорĕсемпе преподавателĕсем вĕрентеççĕ, 2-мĕш курсран пуçласа Мускавра вĕренмелле пулать.

Институт пысăк квалификациллĕ инженер-гидротехниксене вĕрентсе кăларать. Вĕсем çак ĕçсене аван пĕлекенсем пулса тухаççĕ: гидроэлектростанцисем, гидротехника сооруженийĕсем, насос станцийĕсем. шыв пăркисем, çил арманĕсем тума, çĕре пăраласа шăтарма, мелиораци ĕçне, торф кăларма пĕлекенсем пулса тухаççĕ. Институт çавăн пекех тата гидромелиораци техникумĕсем валли педагогика кадрĕсем хатĕрлет.

Вăтам шкулсенчен, рабфаксемпе техникумсенчен 1941, 1942-мĕш çулсенче „отлично" тата „хорошо" паллăсемпе вĕренсе тухнисене 1-мĕш курса экзаменсăрах илеççĕ. Ыттисене экзаменпа илеççĕ. Экзамен çак предметсемпе пулать: математика, физика, хими, вырăс чĕлхипе литература.

Экзаменсем сентябрь уйăхĕн 25-мĕшĕнчен пуçласа 30-мĕшĕччен пыраççĕ.

Вĕренме октябрь уйăхĕн 1-мĕш числинче пуçлаççĕ.

Студентсем валли лайăх столовăй пур, институтăн хăйĕн продовольстви базиi, вĕренӳ оборудованийĕ пур.

Вĕренме кĕнĕ студентсем валли хваттер пур, выртса тăма вырăн-минтерсем параççĕ. Вĕренӳ отличникĕсене тата Хĕрлĕ Çартан аманса таврăннисене стипенди параççĕ.

Тĕплĕрех пĕлес тесен, Сĕнтĕрвăрринчи землехникум канцелярийĕнчен ыйтса пĕлес пулать.

Вĕренме кĕме çырнă заявление тата тивĕçлĕ документсене çак адреспа ямалла: гор. Мариинский Посад, Чувашской АССР, Земтехникум.

ИНСТИТУТ ДИРЕКЦИЙĔ.

ШУПАШКАРТИ АРМАН КОМБИНАТНЕ хулари армансенче ĕçлеме çакăн пек çынсем кирлĕ: мельник-мотористсем, грузчиксем тата черно-рабочисем.

Ĕç вăхăтĕнче (ирхине 8 сехетрен пуçласа 17 сехетчен) çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Урицкого, 15

2—1.

ЧĂВАШ АССР НАРКОМПРОСНЕ главнăй бухгалтер, бухгалтер-ревизор, материалсем тĕлĕшпе ĕçлекен бухгалтер тата статистик кирлĕ. Наркомпроса пăхăнса тăракан учреждениссенче ĕçлеме бухгалтерсем кирлĕ.

Хваттер параççĕ.

Комсомольски райдоротделăн **ÇУХАТНĂ ÇАВРАКА ПИЧЕТНЕ** тĕрĕс мар тесе шутламалла.

2—1.

Чăваш халăхĕн паттăр ывăлĕсем

2. Снайпер Николай Федотов

Лутра кăна хура сăнлă çын. Питĕ çемçен, йăвашшăн калаçать.

— Хушăлкаран эпĕ, пĕлетĕр пуль—„Нарспи" çĕршывĕ...—тесе пуçларĕ вăл хăйĕн калавне.

Ăна итленĕ чухне чĕрере ирĕксĕрех темĕнле иккĕленӳ çуралчĕ: мĕнле геройла ĕç тума пултарнă-ши çак ача сассиллĕ йăваш çын, Хĕрлĕ Çăлтăр орденне мĕншĕн панă-ши ăна?

Анчах та Хушăлка чăвашĕ Николай Дмитриевич Федотов хăй çинчен каласа панине çав тери итлес килчĕ, кунпа пĕрлех малтанхи иккĕленӳ те çухалчĕ, вăл пирĕн куç умĕнчех ӳссе пычĕ...

Тĕрĕс ĕнтĕ, Николай Дмитриевич Хушăлкари Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра конюхра ĕçленĕ чухне пит çемçе кăмăллă, йăваш çын пулнă. Ĕçлессе питĕ тăрăшса ĕçленĕ, вăл ялан ыр ятлă пулнă, ирĕçме-ятлаçма юратман, пур çĕрте те йĕркелĕх пулнине килĕштернĕ. Лайăх ĕçленĕшĕн премисем те илнĕ вăл. Анчах ку—вăрçăччен, хамăрăн тăван çĕршыв çине тискер те хăрушă тăшман килсе тапăниччен пулнă. Мирлĕ вăхăтра.

Фронта килсен Федотов юлташ пачах улшăннă. Унăн чĕринче вĕри хурайманлăх вĕреме тытăннă—вăл, совет çĕршывĕн чăн-чăн патриочĕ пулса, нимĕç захватчикĕсене мĕнле те пулин хытăрах, çирĕпрех тавăрасси çинчен, симĕс шинеллĕ хурахсене ăçта тĕл пулнă, çавăнта вĕлересси çинчен çеç ĕмĕтленнĕ.

...Вăл 1941 çул вĕçĕнче тата 1942 çул пуçламăшĕнче нимĕçсене Мускав патĕнчен хĕвеланăçнелле хăваланă. Кашни кунах Гитлерăн тискер кайăкĕсем çунтарса янă совет ялĕсене, персе-çакса вĕлернĕ совет çыннисен виллисене курнă. Чĕрери тарăху татах та ытларах ӳснĕ унăн. Çавăнпа та наступлени вăхăтĕнче ялан малти ретре пынă, кашни куçа курăннă нимĕçех персе ӳкерме тăрăшнă.

— Пĕринче эпир чарăнса тăтămăр, çавăн пек тӳр килчĕ,—тесе каласа парать Федотов юлташ.—Нимĕçсем контратака тума тытăнчĕç. Эпир юриех пемесĕр выртрăмăр. Çывăхарах килччĕр-ха, кăтартăпăр вара, тетпĕр. Чăнах та, хайхискерсем пирĕн çывăха 80—100 метра çитрĕç. Парăнăр!—тесе кăшкăрма тапратрĕç. Çав вăхăтра вара эпир пĕр харăс автоматсенчен çунтарма тытăнтăмăр та—нимĕçсем çавапа çулнă пекех тăкăнчĕç! Эпĕ хамăн автоматран 7 нимĕçе тирпейлерĕм çавăнта...

С. хули патĕнче суранланса виçĕ уйăх госпитальре выртнă хыççăн хăйсен чаçне каялла таврăнсан, Николай Федотов парти кандидатне кĕнĕ. Кандидат карточкине алла илнĕ чух вăл çакăн пек çирĕп сăмах панă:

— Тăван çĕршывшăн эпĕ пуçăма хума та хатĕр. Нимĕç захватчикĕсене хамăрăн çĕр çинчен хăваласа яриччченех паттăррăн çапăçатăп...

Шăп çав вăхăтра подразделенире снайперсен ушкăнне организацилеме пуçланă пулнă. Федотов тӳрех кайса çырăннă çавăнта.

— Манăн куçсем пит лайăх кураççĕ. Алăсем çирĕп. Эп нимĕçе инçетренех курса вĕлерме пултаратăп!—тет вăл.

Çакăн хыççăн Федотов подразделенири чи хисеплĕ çынсенчен пĕри пулса тăрать. Снайпер винтовкипе оптически прибора вăл ик-виç кун хушшинчех пĕлсе çитет те, кулленех „ухутана" çӳреме тытăнать. Тул çутăличчен чăн малти лини хыçне кайса хăйне валли пĕчĕк окопсем хатĕрлет, унтан ниçтан курăнмалла мар маскировка туса, нимĕçсен оборонине сăнама тытăнать. Ăçта та пулин нимĕç кĕлетки курăнсанах, ăна, прибор витĕр тĕллесе, мушка тăррине лартать те—кĕрс! тутарать. Нимĕç текех нихăçан та тăмалла мар ӳкет... Федотов хырăмпа шуса кайса тепĕр окопа вырнаçать, каллех сăнать.

Пĕтĕмпе вăл 22 нимĕçе вĕлернĕ ĕнтĕ.

— Пĕринче хама та лектеретчĕç, чееленнипе çеç хăтăлтăм,—тет Федотов, кулкаласа.

— Мĕнле апла?—ыйтрăмăр эпир.

— Вĕсен снайперĕ асăрханă мана. Перет те перет. Пульăсем хам çуммах пыра-пыра тăрăнчĕç. Позици улăштарас пулать, тесе шухăшларăм çеç—пуля алăри пăшала çитсе чанклатрĕ. Тепри пуçри пилоткăна шăтарса карĕ. Ак япала! Мĕн тăвас кунта? Шутсăр тарăхрăм. Пăхатăп, хампа юнашарах такам пăрахнă кив пинжак выртать. Часрах çавна туртса илсе бруствер çине çын пуçĕ пек туса хутăм та, хам часрах запаснăй окопа шуса кайса выртрăм. Нимĕç снайперĕ халь тата хытăрах пеме тапратрĕ. Эпĕ вăл ăçтан пенине асăрхарăм. Персен-персен, хайхискер бруствер çинчен кăштах çĕкленчĕ—хăй пенинчен усă пулни-пулманнине тĕрĕслеме ĕмĕтленчĕ курăнать. Эпĕ унччен пĕрмаях тĕллесе выртрăм. Вăл çĕкленнине курсанах спусковой крючок çине пусрăм та нимĕçе шăпах лектертĕм. Каçченех курăнса выртрĕ вара унăн пуçĕ... Каярахри кунсенче çакнашкалах тепĕр икĕ снайпера тирпейлерĕм!

...Подразделенире Федотов юлташăн авторитечĕ кунран-кун ӳссе пырать. Халь вăл çамрăк снайперсене вĕрентме тытăннă. Нумай пулмасть подразделени командирĕпе парторг Федотовăн тăван колхозĕн членĕсем патне çакăн пек çыру çырса янă:

— Сирĕн колхозра конюх пулса ĕçленĕ Федотов юлташ—примерлă, хастарлă, нимрен те хăраман паттăр салтак. Вăл кашни кунах нимĕç захватчикĕсене пĕтерсе пырать, пирĕн çĕнтерӳ сехетне çывхартма пур вăйне хурса тăрăшать... Çавăншăн ăна правительство Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе наградăларĕ. Федотов пек патриотсене—мухтав!

Ст. лейтенант **Л. АГАКОВ.**

ДЕЙСТВУЮЩИ ÇАР.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26. парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 244 Типография №1 Управления полиграф. промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. 6. 53 88 п. л.